Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 129 N (4698) | *1998 çулхи ноябрь (чӳк) уйăхĕн 13-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

# "Эсир - районăн ылтăн фончĕ"

***Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Çамрăксен центрĕнче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ хутшăннипе ертӳçĕсем пулнă çынсемпе, район активĕпе - унăн ылтăн фончĕпе "Пĕтĕм чунтан" тĕлпулу иртрĕ.***



**Ку тĕлшулу мана ăслă ватă мучи çинчен калакан халапа аса илтерчĕ. Астăватăр-и? Тахçан ĕлĕкех пĕр патшалăхра ватă мучисене 80 çула çитсен вĕлерес йăлана йышăннă. Анчах та пĕр хастар çамрăк мĕн пулсан та хăйĕн ашшĕне вилĕмрен çăлса хăварма шут тытнă. Ăна чылай тĕрĕслев иртме, йывăрлăхсене чăтса ирттерме тӳр килнĕ, çак историйĕн телейлĕ вĕçĕн пĕлтерĕшĕ вара çапла: çĕршыва çамрăк та вăйлă алăсем çеç мар, ăслă ăрăвăн представителĕсен ăслă шухăшĕсемпе опычĕ те кирлĕ...**

Çак ăслă шухăш Çамрăксен центрĕнче район пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин районти аксакалсемпе тĕл пулнинче тĕп вырăн йышăнчĕ. Хăнасем хăйсене нумай кĕттермерĕç. Вĕсем хăйсен вăхăтĕнче Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăюллă кĕрешнĕ, кайран вара парти хушнипе хăйсене шанса панă участокра халăхăн интересĕсене мала хурса тӳрĕ кăмăлпа вăй хунă ăслă ăру представителĕсем, çак сехете кĕтнĕ кăна тейĕн. Акă пĕрремĕш ретре хăй вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн шайĕнче потребкооперации "командирĕсенчен" пĕри пулнă Салих Сайфуллович Идиатуллин, вăтăр çула яхăн районти финанс пайĕн заведующийĕ пулнă Х.С.Рахимов, райсоветăн план пайне ертсе пынă К.Е.Калмурзин.

Вĕсен хыçĕнче - председательсен корпусĕ - хуçалăхсен паллă ертӳçисем пулнăскерсем: С.С.Гафуров, М.И.Щербаков, П.И.Ильин, Х.К.Калимуллин, Н.И.Маслаков, М.М.Мифтахов, З.Ш.Бильданов. К.В.Изотова зала кĕрсе ветерансене саламланă май çапла каларĕ: "Яшсем, пăхăр-ха, епле хитре эсир!", ун хыççăн Г.А.Мокеевапа М.Д.Кархалева, çулсем иртнине пăхмасăр хăйсен илемне çухатмансккерсем, тата ыттисем кĕчĕç. Пурĕ 30 çын ытла - питĕ ăслă та пултаруллăскерсем, хăйсен вăхăтĕнче вĕсем питĕ паллă пулнă. Çавăнпа та район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин вĕсене саламласа, тĕрĕс палăртрĕ: "Эсир - хулапа районăн ылтăн фончĕ".



- Сирĕнпе тахçанах тĕл пуласшăнччĕ. Халь акă шăп сирĕн авторитетăр кирлĕ вăхăт çитрĕ, мĕншĕн тесен çĕршывра экономика кăна мар, политика кризисĕ те пырать.

Унтан Фатих Саубанович республикăри, районти экономикăпа социаллă пурнăç шайне сăнласа пачĕ. Нурлат паян тухăçлă ĕçлесе пурăннине цифрăсемпе фактсем илсе кăтартса çирĕплетрĕ.

Малашне, терĕ вăл, Зузеевăри нефть ĕçлесе хатĕрлекен завода, Тĕрнеçри спирт заводне шанса тăратпăр. Агропромышленность комплексĕнче пыракан реформăсем çинчен уйрăм мăнкăмăллăхпа каларĕ, çаплах пирĕн район ку енĕпе чылай регионсемшĕн малта пыракан опыт шкулĕ пулса тăрать тесе хушса хучĕ.

Паллах, паян çак тĕлпулăва пуçтараннă хăнасем район пурнăçĕнче пулса иртекен улшăнусем çинчен лайăх пĕлеççĕ. Кайран сăмах илнĕ С.С.Гафуров, хуçалăха 29 çул хушши ертсе пынăскер, тата 30 çул хушши председательте ĕçленĕ Н.И.Маслаков республикăра тата районта ирттерекен политика çинчен ырласа каларĕç, хăйсен канашĕсене пама та манмарĕç.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

# Ял паттăрĕсем Хусанта пухăнаççĕ

Ноябрĕн 14-15-мĕшĕсенче Хусанти "Батыр" Физкультура çуртĕнче ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министерстви Спорткомитетпа тата Атăлçи халăхĕсен Федерецийĕпе пĕрле наци кĕрешĕвĕпе ăмăртусем ирттерет.

Унта районсенчи ялсенчи кĕрешӳçĕсем çеç хутшăнĕç. Кĕрешӳ 60, 70, 80, 90, 100 килограмлă тата йывăр виçе категорийĕсемпе пулĕ. 50 çултан иртнĕ ветерансем икĕ виçе категорийĕнче (90 килограмм тата ытларах) кĕрешĕç.

Ăмăртусене хутшăнма ноябрĕн 14-мĕшне çитмелле. 11 сехетрен тытăнса 13.00 сехетчен - мандат комиссине иртесси, виçĕнесси, 14.00 сехетре ăмăртусем тытăнаççĕ.

# Ăшшăн саламлатпăр!

Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕпе "Лениногорскри тампонаж ĕçĕсен управленийĕ" ОООн Нурлатри филиалĕн начальникне **Танзил Кабирович Мусина** "Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ нефтяникĕ" хисеплĕ ят панă.

Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕпе "Татнефтепром" ОАОн Зузеевăри нефть промыслин начальникĕн çумне **Валерий Алексеевич Николаева** Тутарстан Республикин Хисеп грамотипе наградăланă.

*** Кӳршĕ республика хыпарĕсем**

# Мускаври чăвашсен пухăвĕ

Юпа уйăхĕн вĕçĕнче Мускаври "Баку" кинотеатрта чăваш диаспорĕн пухăвĕ иртрĕ. Ăна Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацине йышăннăранпа 8 çул çитнине халалланă.

Чăваш Республикин Президенчĕн Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи яланхи представителĕ Г.С.Федоров çак декларацин пĕлтерĕшĕ çинчен каласа панă.

Г.С.Федоров Мускав чăвашĕсене ял çыннисен кăçалхи çитĕнĕвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Пухăннисем массăллă информаци хатĕрĕсенчен пирĕн республикăра типĕ çанталăка пăхмасăрах, лайăх тухăç туса илнине малтанах пĕлнĕ.

Пухура çавăн пекех обществăн паллă деятелĕ, тата ученăй А.Хузангай 50 çул тултарнине паллă тунă.

Мускаври наци-культура автономин тата Чăваш Енрен тухнă ветерансен канашĕн ĕçнехĕлне йĕркелессипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă.

Юлашкинчен Виктор Петров ертсе пыракан Кулăш театрĕ икĕ спектакль лартса панă.

**В.КУЗНЕЦОВ.**

# Çăмăллăхсене анлăлатнă

Раççей Çул-йĕр министерстви аслă шкулсенче тата техникумсенче вĕренекен çамрăксене чугун çулпа çӳренĕшĕн паракан çăмăллăхсене анлăлатнă. Малашне асăннă çамрăксем çул çӳремелли çăмăллăхсемпе авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕ таран усă курĕç.

## Хаçат çыранакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - 25 тенкĕ те 20 пус; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# "Эсир - районăн ылтăн фончĕ"

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).





Унтан Г.А.Мокеева, культура ветеранĕ К.В.Изотова пуçлăха йĕркеленĕ тĕлпулушăн тав турĕç. "Нурлатсем сире шанаççĕ, çавăнпа та çак туйăм сире малашне те вăй кĕртмелле. Эпир, кунта пуçтараннисем вара, вăй çитнĕ таран пулăшма хатĕр", - тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне районти старейшинăсен совечĕн председателĕ, суту-илÿ тава тивĕçлĕ ĕçченĕ С.С.Идиатуллин. П.И.Ильин та унăн сăмахĕпе килĕшни çинчен пĕлтерчĕ.

Администраци пуçлăхĕ КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Г.К.Гиматдинова хисеплесе асăнма сĕннине пурте кăмăлласа йышăнчĕç, вăл ăслă та çирĕп наставник, çынсене ăнланма, вĕсенчен хытă ыйтакан пулнине ветерансем ырăпа аса илчĕç.

Тĕлпулу ăшă та уççăн калаçнă лару-тăрура иртрĕ, уяв сĕтелĕ хушшинче туслăн калаçса ларнă май юрă-кĕвĕ те янăрарĕ. Кунта пуçтараннисен пурин те мĕн çинчен аса илмелли, каламалли пурччĕ. Н.А.Калипаров, В.В.Казаков, 30 çул хушши тĕп ветврач пулса ĕçленĕскер, К.И.Калмурзин тата ыттисем сăмах илчĕç. Вĕсенчен кашни, мĕнле калас, яланах тăрăшса ĕçленĕ, мĕнпур лару-тăру çинчен пĕлсе тăнă. Çавăнпа та вĕсене район малашне мĕнле пурăнасси пăшăрхантарнине ăнланмалла ĕнтĕ. Çакна лайăх ăнланса, Фатих Саубанович хускатнă кашни ыйту çине тĕплĕн хуравлама тăрăшрĕ. Сĕт тата çу хакĕсем ÿснĕ-и? Паллах, çакна ăнланмалла. Анчах та ку çынсене йывăр лару-тăрăва кĕртес тенине пĕлтермест, ку ял хуçалăх продукцийĕн хакне ÿстерес тесе шутлани çеç. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ чакать-и? Çук, эпир хуçалăхсене тупăшлă отрасле аталантарма май паратпăр...

Сĕтел хушшинче çаплах вăрлăх хатĕрлес, тырпул ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен хуçалăхсем йĕркелемелли, сывлăхлă та тĕреклĕ ăру ÿстермелли çинчен те калаçрĕç. Пуçтараннисене хускатнă кашни тема кăсăклантарчĕ, вĕсем пурне те питĕ тимлĕ сÿтсе яврĕç. Вĕсем хăйсен опычĕпе çамрăксене кăмăлпах паллаштарма хатĕрри палăрчĕ. Çамрăк пулманнине пăхмасăр, вĕсем усăллă ĕç пурнăçлама хатĕр. Çак тĕлпулура тата виçĕ хăна пурччĕ - ыттисенчен чылай çамрăкрах, вĕсемпе пуçлăх хăй паллаштарчĕ. Кусем вĕсем - "Агрокультура" кооперативра сысна пăхакансем Галина Кузьминична Виноградовапа Нина Ивановна Ефимова тата Валентина Федоровна Кульметьева.

- Çул лайăхлансан, эпир сире çав хуçалăха илсе кайса кăтартăпăр, вĕсем мĕнле ĕçленипе паллаштарăпăр. Çак хĕрсем тăрăшса ĕçлени питĕ тĕлĕнтерет, - терĕ Фатих Саубанович.

Çапла, ĕçпе чапа тухнă çынсем районта сахал мар. Эпир вĕсемпе мăнкăмăлланма пултаратпăр. Ватă çынсем шыв, газ кĕртнĕшĕн, юлашки вăхăтра социаллă-культура объекчĕсем ÿссе ларнишĕн чĕререн савăнни çинчен пĕлтерчĕç, тав турĕç.

- Эпир çакăн пек тĕлпулусене час-часах ирттерме тăрăшапăр, - терĕ сывпуллашса Фатих Саубанович тата лайăх канма сунчĕ. Тата тепĕр хут уяв ячĕпе саламларĕ. Çак уявсем - Тутарстан Республикин Конституцийĕн кунĕ тата Октябрьти Социализмлă Аслă революци 81 çул тултарнă кун пирĕн хăнасемшĕн хаклă. Çав çулсенчи пулăмсем вĕсемшĕн историри йăнăш мар, аслă çĕнтерÿ пулнă вĕт. Çакă çынсене ăстăн тата экономика енчен ирĕклентернĕ, вĕсем хăйсен идеалĕсене улăштарман, хăйсен çирĕп шухăшĕсенчен нихăçан та вăтанмĕç. Паянхи тĕлпулу вăхăтĕнче вĕсем пĕр-пĕрин çине хăюллăн, ним пытармасăр пăхрĕç, пĕр-пĕринпе ăшшăн та чун-чĕререн калаçрĕç, савăк кăмăлпа саланчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ яваплă, канăç пĕлмен çынсем, администрацие хăйсен сĕнĕвĕсемпе, шухăшĕсемпе пĕрре мар килĕç-ха тесе шутлатпăр. Иккĕленмелли çук, килеççех. Пирĕн ăрăва халь аслисен, пурăнса ăс пухнă çынсен канашĕ тата пулăшăвĕ нихçанхинчен ытларах кирлĕ.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

Н.АЗИЗОВ сăнÿкерчĕкĕсем.

# Фестивальтен - дипломпа

***Кăвар чĕре. Кăвар чĕлхеллĕ***
***Чăваш ачи, сассуна пар!***
***Тухсам кунта, сана кĕтеççĕ.***
***Килсем, килсем!***
***Эс пур, çук мар!***

Уççăн янăрать Галина Михайлавна Никитинан, ертсе пыракансkерĕн, сасси. Малалла вăл Ульяновск облаçĕнчи чăваш ачисен "Чăваш ачи, сассуна пар!" II фестивалĕ уçăлни çинчен пĕлтерет. Йышлăн пухăннă ачасем ку уява. Фестивале Ульяновскри пур районтан та пултарулăх ушкăнĕсем килсе çитнĕ. Хăйсен ăсталăхне кăтартма шухăш тытнă çынсен шучĕ 300 тен те иртет. Пилĕк сехет хушши артистсем пĕр-пĕрне улăштарса сцена çинче савăнтарчĕç пухăннă халăха. Хăйсен пултарулăхĕн тĕрлĕ енĕсене кăтартма тăрăшрĕç: пĕччен тата хорпа юрларĕç, такмак шăрантарчĕç, сăвă вуларĕç, ташларĕç, шÿтлерĕç, тĕрлĕ инструментсемпе каларĕç, вăйă-кулă кăтартрĕç...

Профсоюзсен (пурне те ăнланмалла пултăр тесе ĕлĕкхи ячĕпех калатăп) керменĕн сценине "Ирхи çăлтăр" передачăринчен пĕрре те кая мар хатĕрленĕ. Эрешлесе илемлетнĕ арка айĕнчен тухса, пусма картлашкисемпе анса юрă шăрантармалла тунă. Çÿлерех, шарсене пĕр-пĕринпе юнашар çыхăнтарса тунă хĕвел ăшшăн кулать, пайăркисене валеçет. Икĕ аяккипе, çаплах ăсталанă, тĕрлĕ тĕслĕ чечексем сывлăшра вĕçсе тăраççĕ. Çаксем çумне халиччен телевизорпа çеç курнă пысăк телекамерăсене хушсан, чун-чĕре çĕртен хăпса самаях çÿле хăпарать. Çак фестивале йĕркелекенсене: "Еткер" телекăларăма, "Еткер" ыркăмăллăх фондне, Ульяновск облаçĕнчи Чăваш автономине, И.Я.Яковлев обществине, "Канаш" хаçат редакцине тав сăмахĕ калас килет.

Керменĕн иккĕмĕш хутĕнче алĕç искусстви ăстисен пултарулăхне кăтартакан выставка хатĕрленĕ. Унта тĕрĕ тĕрлекенсен, йывăçа касса эрешлекенсен, фотографсен, художниксен ĕçĕсене курса тĕлĕнме пулать.

Çак йĕркесемпе паллашса, вулакан ыйтма пултарать:

- Пирĕн вара мĕн ĕç пур унта?

Малалла, шăпах çавăн çинчен. Чĕмпĕр телевиденийĕпе тухса тăракан "Еткер" кăларăма куракансем çак фестиваль иртесси çинчен маларах илтнĕ ĕнтĕ. Уксăмлă шкулĕнчи хут çинче палăртман художество пултарулăхĕ енĕпе ĕçлекен ушкăн çакăн çинчен илтсен, фестиваль йĕркелÿçисем патне шкул ятĕнчен заявка çырса ячĕ. Часах йыхрав та çитрĕ. Çапла вара, çамрăк юрă ăстисем Алена Акмулина (XIкл.), Ирина Пайдуганова (VII), Октябрина Сендюкова (V) хăйсен ертÿçипе Сергей Михайлович Ендиряковпа (музыка учителĕ) чÿкĕн 3-мĕшĕнче ирех çула тухрĕç. Чĕмпĕрте вĕсене ăшшăн кĕтсе илчĕç, вырнаçтарчĕç. Тутар Республикинчен килнĕ тесе фестиваль программине маларах кĕртрĕç. Алена - Валентина Кузнецова репертуарĕнчи "Сансăрах", Октябрина - Нина Измайлован "Çутçанталăк пулăмĕ", Ирина - Василий Давыдов-Анатри сăвви тăрăх А.Никитин кĕвĕленĕ "Тавах сире, учительсем" юрăсене юрласа фестивале хутшăнчĕç, диплом илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Чăваш халăх культурине упраса, малалла аталантарас ĕçре Уксăмлă шкулĕ тата тепĕр пĕчĕк утăм турĕ. Çавна пирĕн шкул Ульяновск облаçĕнчи вĕрентÿ управленийĕн дипломне тивĕçлĕ пулни çирĕплетсе парать.

Юрă-ташă уявĕ вĕçленнĕ май, жюри канашлăва кайнă вăхăтра, Сергей Михайлович Ендирякова фестиваль программипе Тутарстантан килнĕ хăна тесе, хăйĕн юррисене юрласа пама чĕнчĕç. Зал алă çупса кĕтсе илни, юрланă вăхăтра хавхалантарни, юрăçă пултарулăхĕ çÿлĕ шайра пулнине кăтартрĕ.

Хамăр тăрăхри чăвашсемшĕн ырă хыпар илсе килнĕскерсене тав тăватпăр, ырлăх-сывлăх, телей, юрату сунатпăр.

**"Чăваш ачи, сассуна пар!" фестиваль иртни çинчен "Еткер" телекăларăмра чÿк уйăхĕн 18-мĕшĕнче курма пултаратăр.**

**Г.ЕНДИРЯКОВ.**
**Уксăмлă ялĕ.**

# Институт анлăланать

КУН хыççăн КУН

Хусанти бизнес кадрĕсене хатĕрлекен институт октябрь вĕçĕнче çĕнĕ корпус уçнине паллă турĕ. Церемонине парламент Председателĕ Фарид Мухаметшинпа Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн Секретарĕ Валентина Липужина хутшăнчĕç.

Çав кунах институтра "XX-XXI ĕмĕрсенчи инноваци технологийĕсем" темăпа тĕнче шайĕнчи наукăпа практика конференцийĕ ĕçлеме пуçларĕ. Пухăннисем умĕнче сăмах тухса каласа, Ф.Мухаметшин çĕнетÿ ĕçĕсем республикăри социаллă экономика аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ, çак сферăна парламент сакунĕсемпе пулăшасси çинчен пĕлтерчĕ.

- Юлашки çулсенче чылай аслă шкулсем хăйсен аудиторине çухатрĕç, - аса илчĕ парламент Председателĕ. - Çĕнĕ профессисем питĕ кирлипе нумай коллектив хăйсен сулăмĕнчен пăрăнчĕç, тĕплĕн хатĕрленмесĕр (пурлăхпа наука никĕсĕсем çителĕксĕр) студентсен ушкăнĕсем йĕркелерĕç. Бизнеса пулăшакан институтăн тарăн пĕлÿллĕ специалистсене хатĕрлеме май пур.

Институт ректорĕ Н.Прусс тата педагогсем Ф.Мухаметшин саламне йышăнчĕç. Вăл ăсчахсене çирĕп сывлăх, çитĕнÿсем сунчĕ.

**ТР Патшалăх Канашĕн пресс-центрĕ.**

* Этем тата çутçанталăк

# Вăрман пуçлăхĕ

Чиешне лесничествин егерĕ, ТР вăрман хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Василий Сергеевич Варламов çакăн пек калама юрататъ: "Сунар этемпе çутçанталăк хушшăнăвĕсене тĕрĕс палăртать. Сунар пулмасан çутçанталăк шайлашăвĕ пĕтет, апла пулсан васкавлă мерăсем йышăнмалла". Унпа пĕр сăмахсăр килĕшмелле. Хăйĕн 70 çулĕнчен 30 çулне вăл - вăрманçă, 20 çулне егерь пулса ĕçленĕ вĕт. Вăл тахçанах пенсире ĕнтĕ, çапах та хăйне сывă та çирĕп туять, чи кирли вара - унăн пысăк та пуян опычĕ, вăрман тата унта пурăнакансем çинчен лайăх пĕлни, çаксем вара унăн ĕçĕнче питĕ кирлĕ пахалăхсем. Тутарстан вăрман хуçалăхĕн управленийĕ ăна 3000 гектар вăрмана тата 200 гектар çинчи шыв-шура (Çарăмсан юханшывĕ тата кӳлĕсем) пăхса тăма шанса панă.



Пĕр егерь çеç çакăн пек пысăк территорие тĕрĕслесе тăма пултарайманни паллă ĕнтĕ. Вăл хăйсен ирĕкĕпе пулăшакансемпе ĕçлет - сунарçăсем, вĕсем егерь патĕнче учетра 60 çынна яхăн тăрать.

Егерĕн тĕп задачи - шанса панă хуçалăхра чĕрĕ тата чĕрĕ мар çутçанталăка шайлашуллă тытса тăрасси. Кунта вара егерь пуçарулăхĕнчен, çутçанталăк запасĕсем ан чакчĕр тесе ĕçе йĕркелеме пĕлнинчен нумай килет. Акă, тĕслĕхрен, шыв кайăкĕсене ĕрчеме мĕнле условисем тăваççĕ. Хуçалăхра кӳлĕсем çителĕклĕ вĕт. Егерьпе сунарçăсем кĕркунне бульдозер тара тытса çуркунне шыв юхса ан кайтăр тесе кӳлĕ йĕритавра тăпрана çĕклеççĕ. Кӳлĕсене шыв тулать, унта кайăк кăвакалсем, кайăк хурсем йăвасем çавăраççĕ, акăшсем те апат тупма пултараççĕ. Мĕн тăваççĕ тетĕр эсир? - тет Василий Сергеевич, - браконьерсем шыв юхма канав чаваççĕ, пулă тытма серепе лартаççĕ, пулă вара çав вăхăтра шăпах вăлча сапать. Браконьер пулă тытса ырă курать, çулла вара кӳлĕре пулă çук. Пăшисем хĕлле ăвăс хуппипе; хăва хуллипе тăранса пурăнаççĕ. Хир сыснисем мĕнпе тăранаççĕ-ха? Вĕсене этем пулăшать. Егерьпе сунарçăсем вĕсене валли апат хатĕрлеççĕ - тырă каяшĕсем, кăшман, çĕрулми. Хир сыснисем çилпе сивĕрен пытанса хăмăшлă шурлăхлă, тарăн варсенче хĕл каçаççĕ, унта вĕсем хăмăш тымарĕсемпе тăранаççĕ. Хĕлле апата çунасемпе илсе тухса палăртнă вырăнсене салатаççĕ.

Çуркуннепе кĕркунне сырăшсене тăвар сапса параççĕ.

Егерьпе ăна пулăшаканĕсем кашкăрсене шеллемеççĕ. Çак тискер кайăксен кĕтĕвĕ хĕл каçа ку вырăнсенче 10 таран çамрăк пăшине, хир сыснисене, хир качакисене пĕтернĕ. Çапла, хальхи вăхăтра Варламов вăрманлăхĕнче кашкăрсем çук, урăх çĕртен килсе леккелекеннисем пулсан çеç.

Çӳлевĕçсем пур вара.

Василий Сергеевича эпĕ тахçанах пĕлетĕп, вăл вăрман хуралçи пулса ĕçленĕреппех. Ун çинчен çапла калама пулать: сунарçă пулса çуралнă.

Хастар, канăçсăр, çав вăхăтрах питĕ тимлĕ. Çутçанталăка яланах юратнă, хакланă, вăрмана тата унта пурăнакансене лайăх пĕлет, сунарçа кайсан яланах телейлĕ, нимĕн те тытайман пулсан та. Ырă суннипе тата уçă кăмăллă пулнăшăн ун патне çынсем туртăнаççĕ. Ентешĕсем ун çинчен çапла калаççĕ: "Варламов ăслă, унăн чунчĕри таса. Ăна юратмасăр пултараймастăн".

Ăста сунарçăн Василий Варламовăн вăрман тата унта пурăнакансем умĕнчи тивĕçĕ асăрханмасăр юлман. Ăна "Патшалăх вăрман хуçалăхне сыхлас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн" паллăпа виçĕ хут награднăлана. Ăна ытти сунарçăсем те хисеплеççĕ. Браконьерсене вара унăн ячĕ хăратать, вĕсене вăл шеллемест.

Варламов егерĕн мăшăрĕ - Тамара Александровна упăшкипе пĕрле 12 çул хушши вăрман хуралçи пулса ĕçленине нумайăшĕ пĕлмеççĕ те пулĕ. Хĕрарăмшăн çăмăл ĕç мар! Çапах вăл мăшăрне унăн пуçарăвĕсенче ялан пулăшса пынă. Ашшĕ-амăшĕн ĕçне виçĕ хĕрĕ те хакланă, халĕ вара çулла мăнукĕсем килеççĕ - вĕсемшĕн чи пысăк савăнăç.

**В.КОМОЛОВ.**

**Сăнӳкерчĕкре: акă вăл Чиешне лесничествин хăюллă егерĕ В.С.Варламов. Василий Сергеевича 70 çулхи юбилейпе тата вăрманта ĕçлеме тытăннăранпа 50 çул çитнипе саламласа, ырлăх-сывлăх, чун-чĕре хастарлăхĕ сунатпăр. Малалла та çапла пул, вăрман пуçлăхĕ!**

## Редакци почтинчен

Вулакан тав тăвать

### Медицина ĕçченĕсене тав

Пурнăçра мана чылай хура-шур курма тиврĕ, анчах та ватăлнăçем чирсем аптратсах çитерчĕç. Халь вĕсем манăн "пуххипех", çавăнпа та медицина ĕçченĕсенчен пулăшу ыйтма тӳр килет. Кăçал та акă поликлиника, участокри врач патне кайрăм. Тамара Васильевна Пермякова ялан питĕ тимлĕ, ырă кăмăллă, Любовь Михайловна Алифанова медсестра та çавăн пекех. Вăл вăтăр çултан çеç иртнĕ-ха, 1983 çулта Ульяновск хулинчи медицина училищине пĕтернĕ, Нурлатра вара 1986 çултанпа вăй хурать. Мана инъекцисем çырса пачĕç, анчах та больницăна çӳреме тӳр килмерĕ: Любовь Михайловна хăй пыратчĕ. Тӳрех курăнать, питĕ тирпейлĕ çын. Хăйĕн ĕçне те лайăх пĕлет. Турă сывлăх патăрччĕ ăна!

Пире пулăшакан медицина ĕçченĕсене пурне те çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

**А.КУЗНЕЦОВ.**
**Нурлат хули.**

### "Аппа пирĕншĕн анне пекех"...

Пирĕн аслă аппа, Гульзиган нумаях пулмасть 63 çул тултарчĕ. Камтăр çапла калĕ:

"Вара мĕн, çуралнă кун кашни çул пулать". Пирĕн аппан çуралнă кунсем вара пирĕншĕн йывăр ачалăх тапхăрĕсене аса илнипе палăрса тăраççĕ.

... Пирĕн атте фронтра вилсен, аннен эпир, тăватă ача пулнă. Чи асли - аппа. Çавăнпа та ăна ĕçне те, хуйхине те, нушине те аннепе пĕр тан тӳсме тивнĕ. Эпир, кĕçĕннисем майĕпен ӳсрĕмĕр, шкул пĕтертĕмĕр. Халь те астăватăпха: эпир пурăнакан Вăтам Чаллă ялĕнчен эпир шкулта вĕренекен Кислев ялне çуран та, лашапа та апат-çимĕç илсе пыратчĕ. Вăтам шкулта вĕренсе тухнă хыççăн кĕçĕн шăллăм Ислам медицина институтне пĕтерчĕ, Саимя - медицина училищине. Кунта та аппа пулăшмасăр пулмарĕ, пире вĕрентсе кăларса ура çине тăратас тесе хуçалăхра вăй хучĕ. Хĕлле путексем пăхатчĕ, çуллапа кĕркунне сахăр кăшманĕн уйĕнче ĕçлетчĕ.

Кĕçĕннисене ура çине тăратнă хыççăн çеç вăл хăйĕн çинчен шутлама вăхăт тупрĕ: ятарлă курс пĕтерсе обществăлла апатлану предприятийĕнче ĕçлеме пуçларĕ, ĕç ветеранĕ ята илме тивĕç пулчĕ, тивĕçлĕ канăва та унтанах кайрĕ.

... Халь пирĕн анне те çук ĕнтĕ. Анчах та час-часах пурнăçри тĕрлĕ ларутăрура - савăнăç е хуйхă, канаш кирлĕ-и е пулăшу-и, эпир, тăвансем аппа патĕнче пуçтаранатпăр. Çавăнпа та унăн çуралнă кунĕсем пирĕншĕн çемье уявĕ пулса тăраççĕ. Пирĕншĕн хăйне шеллеменшĕн эпир хамăр аппана мĕн виличчен тав тăватпăр. Çирĕп сывлăх, телей сана, Гульзиган аппа!

**С.ГАНИЕВА,**
**Нурлат хули.**

*Редакцие шăнкăравлаççĕ*

### Тепĕр ыйтăва татса панă

"Сельхозтехника" микрорайонĕнчи çуртсене начар хутса ăшăтни пирки эпир пĕрре мар çырнă ĕнтĕ, ку вăл çак микрорайонта пурăнакансемшĕн çеç мар, ытти предприятисемпе организацисемшĕн те йывăрлăх пулса тăчĕ. Хальхи вăхăтра çак ыйтăва тинех татса пани çинчен пĕлтерме васкатпăр: пур çуртсене те тенĕ пекех, машинăсем туса кăларакан завод котельнăйĕ, çутçанталăк газĕпе ĕçлекенскер, хутса ăшăтать. (Ытти ĕçсене те вĕçлеççĕ ĕнтĕ). Кун пирки пире çак микрорайонта пурăнакан Л.Н.Коростелева пĕлтерчĕ. Çак ыйтăва татса пама пулăшнисене, чи малтан хула, çаплах ăшă сечĕсен ертӳçисене, котельнăй мастерне Х.Г.Тагирова, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тата "Сельхозтехника" АО ертӳçисене вĕсем чун-чĕререн тав тăваççĕ.

* Ашшĕ-амăшĕсем пăшăрханаççĕ

### Урамсенче тĕттĕм

Хисеплĕ редакци! Сирĕн пата чугун çул поселокĕнчи 8-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем çыраççĕ. Ĕç акă мĕнре. Пирĕн 5-6 классенче вĕренекен ачасем иккĕмĕш сменăра вĕренеççĕ. Занятисем 17 сехет иртсен çеç, урамра тĕттĕмленсен, вĕçленеççĕ. Шкул çывăхĕнче - Калинин тата Красноармейская урамĕсем тăрăх Молодежная урамне çити юпасем çинчи хунарсем çутатмаççĕ - çунса кайнă пулас. Анчах та вĕсене улăштармаççĕ. Эпир хамăр ачасемшĕн пăшăрханатпăр, хирĕç кĕтсе илес - хамăр ĕçре. Пирĕн микрорайонта мĕнле кăна çын çӳремест вĕт, килсĕр йытăсем те çителĕклĕ. Çавăнпа та эпир вырăнти службăсене çак факта тимлĕх уйăрма ыйтатпăр, малашне "тĕттĕм" уйăх - ноябрь вĕт-ха.

**Ашшĕ-амăшĕсен ушкăнĕ ятĕнчен СЕРГЕЕВА.**

### ПИРĔН АЧАСЕНЕ ПУЛĂШĂР

Хисеплĕ редакци! Сирĕн патăра хулари 1-мĕш номерлĕ вăтам шкула çӳрекен ашшĕ-амăшĕсем çыраççĕ. Пирĕн ачасем иккĕмĕш сменăра вĕренеççĕ, киле тĕттĕм пулсан çеç таврăнаççĕ. НГДУн администраци çурчĕ çывăхĕнчи çул пăрăнса кайнă çĕрте машинăсем питĕ нумай çӳреççĕ, тимлĕ пулмасан машина айне те лекме пулать. Хула влаçĕсем çак вырăнти ыйтăва татса параймĕç-ши? Светофор вырнаçтараймасан та (ăнланатпăр, укçа çук) çуран çӳрекен çын каçмалли çул палăртма пулать вĕт. "Аслати авăтмасăр арçын сăхсăхмасть..." принципа çеç пурăнма юрамасть вĕт-ха.

**Ашшĕ-амăшĕсен ушкăнĕ.**

Кил-çурт, хушма хуçалăх

# Лайăх нӳхреп - çур пурлăх

***Нӳхрепре пĕлтĕр те, кăçал та упрама хунă çĕр улмине вĕтĕ калта пек кăпшанкă тапăнса тăнран ячĕ. Кăçал çĕр улмине çавăнпа нӳхрепрен те кăларма тиврĕ.***

Вера АНИСИМОВА.

Сăлтавĕ кунта вăрлăхра мар, нӳхрепре пулас. Мĕншĕн тесен тĕплĕн тасатса хатĕрлемен нӳхреп тĕрлĕ çӳп-çап, пахча çимĕç юлашкийĕсемпе хутăшса тĕрлĕ чир-чĕрсемпе сиенлĕ кăпшанкăсемшĕн (унта нӳрĕк пысăк пулсан пушшех те) питĕ лайăх "кил" пулса тăрать. Çавăнпа та нӳхрепе кĕр умĕн (май килмен пулсан, каярах та, пахча çимĕçсем хума ĕлкĕреймен пулсан) тĕплĕн хатĕрлемелле.

Лайăх нӳхреп типĕ пулмалла, ăна уçăлтарса тăмалла (вентиляци пăрăхĕсем вырнаçтарса) тумалла. Ахальтен мар нӳхреп тăвас текенсене çак ĕçе лайăх пĕлекен çынсемпе канашласа пăхма, шыв айĕнчи шывсен сийĕ еплерех пулнине палăртма хушаççĕ.

Нӳхрепĕн стенисене кирпĕчрен е чултан, май пулсан бетонран хатĕрлесен аван. Ăна çурхи шывсемпе çумăр шывĕсем лекесрен лайăх хӳтĕлемелле. Хĕллехи вăхăтра нӳхрепре сывлăш 0 градусран, çулла 10 градусран ăшă пулмалла мар.

Тĕрлĕ кăшлакан чĕрчунсем лекесрен нӳхреп чӳречисене, вентиляци пăрăхĕсене вĕтĕ сеткăпа хупламалла, алăксенче шăтăк-çурăксем пулмалла мар.

Таса пултăр тесен кĕр умĕн нӳхреп стенисене, маччине извеçпе шуратмалла, урайне (хăма сарнă пулсан) çуса илмелле. Йывăçран хатĕрленĕ çӳлĕксене 1 литр çине 1-2 апат кашăкĕ чухлĕ сода хушнă вĕри шывпа çуса тасатмалла.

Нӳрĕке туртма нӳхреп урайне хăйăр сарни те пулăшать.

Нӳхрепе тĕплĕ суйласа тасатнă, лайăх кушăхтарса типĕтнĕ пахча çимĕç кăна хумалла. Вăл мĕнле упраннине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, кирлĕ пулсан суйласа тасатмалла.

# Йăнăшас мар тесен

**Улмуççисем лартса чĕртме шутлатпăр. Анчах мĕнле сорт лайăхраххине пĕлейместпĕр. Кĕскен каласа парсан аванччĕ.**

АНГЕЛИНА Н.

Пахчара тĕрлĕ вăхăтра пулса çитекен улмуççисем пулсан аванрах. Çавăнпа та улмуççи хунавĕсене туяннă чух çакна шута илĕр. Мĕнлерех сортсем пулсан лайăх?

Чи малтанах, паллах Антоновка. Пурте ăна уçă тутăллă пулнăшăн, лайăх упраннăшăн юратаççĕ. Ку йывăç нумай çул ӳсет, сивве тӳсĕмлĕ. Лартнă хыççăн ултă-çичĕ çултан çимĕç пама пуçлать.

Анис полосатый текен авалхи хĕллехи сорт тухăçĕ те аван пулать. Çимĕçсем февраль уйăхĕччченех упранаççĕ. Ку сорт сивве питĕ тӳсĕмлĕ. Çавăнпах селекционерсем унăн турачĕсемпе хĕллехи сортсене кăларнă чухне усă кураççĕ.

Бабушкино текен сортăн пĕр çитменлĕх çеç пур, кая юлса çимĕç кӳме пуçлать: лартнă хыççăн вун пĕр-вун икĕ çултан кăна. Анчах та унăн ĕмĕрĕ питĕ вăрăм, çимĕçĕсем те тепĕр çулхи çулчченех упранма пултараççĕ.

Апорт улмийĕсем питĕ хитре. Йывăçĕ çӳллĕ, лайăх аталанать, илемлĕ курăнать.

Çуллахи вăхăтрах пан улми çисе курас килсен Грушовка московская сорта лартмалла. Кăшт йӳçекрехпылак тутăллă улмисем августрах пулса çитеççĕ, анчах нумай вăхăт упранаймаççĕ. Кĕрхи сортсенчен Коричное полосатое текеннине сĕнме пулать. Сĕтеклĕ, хитре улмисем августра пулса çитеççĕ, икĕ уйăх аванах упранаççĕ. Сорт хĕл сивинчен хăрамасть, анчах лартнă хыççăн çичĕ-сакăр çултан çеç çимĕç кӳме пуçлать.

Белый налив сорт та пахчана пуянлатать. Сивĕрен хăрамасть. Çимĕçĕсем августра пулса çитеççĕ, тути аван, техĕмлĕ.

Осеннее полосатое пысăк тухăç паракан, сивĕрен хăраман, шултра çимĕçлĕ сорт, улмисем декабрь вĕçĕччченех аван упранаççĕ. Вăл пирĕн тăрăхра ӳсекен чи лайăх сортсенчен пĕри.

Тупма май килет пулсан, Титовка сорт та туянма тăрăшмалла. Авалтанах лартса ӳстерекен сорт сивĕ хĕлсенчен хăрамасть, пысăк тухăçлă, тутлă, çимĕçсем нумайччен пăсăлмасăр упранаççĕ.

# Пĕлтерӳсем

**Сутатпăр:**

**Çĕр участокĕ. Телефон: 2-12-53.**

* * *

**1987 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108. Телефон: 5-11-62, ĕç кунĕсенче 18.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

**Тĕрли:**

**Ноябрĕн 14-мĕшĕнче Çамрăксен центрĕнче Ульяновскри тир фабрикинче тиртен çĕленĕ кĕрхи-хĕллехи атă-пушмак сутаççĕ.**

* * *

**ВАЗ-2107 автомобилĕн документчĕсене тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. Телефон: 5-23-97.**

* * *

**Ринат Абдуллин ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. Адрес: Советская урамĕ, 143-11.**

* * *

**Октябрь МСО 1-мĕш ПМК яланлăха ĕçлеме электрик кирлĕ.**

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***

***Пирĕн патра кăна!***

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекун, ноябрĕн 13, 27-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 11 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

# Пурте выляма пултараççĕ

Шахмат - тĕлĕнмелле япала. Пирĕншĕн, ветерансемшĕн, шахмат - пурнăç çăлкуçĕ, вăл пире пурăнма тата ĕçлеме пулăшать, ватăлтармасть. Чун-чĕрене хавалантарать. Шахматла тимлĕ выляс тесен ĕçе тата канăва тĕрĕс йĕркелемелле. Шахматла çамрăксем те, ватăсем те выляççĕ. Çавăнпа та вăл икĕ хут хаклă. Ачасемпе çамрăксен клубĕнче шахматла тата шашкăлла выляма вĕрентекен кружок пĕрремĕш çул кăна ĕçлемест ĕнтĕ. Вăл икĕ сменăпа ĕçлет: ирхине 8.00 сехетрен тытăнса 11.00 сехетчен, кăнтăрла хыççăн 13.00 сехетрен тытăнса 16.00 сехетчен кашни кун, шăматкунпа вырсарникунсемсĕр пуçне. Унта шкулта вĕренекен ачасем çӳреме пултараççĕ, районти тĕп больницăри ачасен консультацийĕнчен справка çеç кирлĕ. (Ашшĕ-амăшĕсене пĕлсе тăма - занятисем тӳлевсĕр!)

Аслисем вара шахматла выляса хулара мала тухассишĕн ирттерекен ăмăртусене хутшăнма çырăнма пултараççĕ. Ăмăртусене кăмăл пуррисем пурте хутшăнма пултараççĕ. Хутшăнакансен ушкăнĕ пухăнсан, ноябрĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче выляма тытăнма шутлатпăр.

Ăмăртусене хутшăнас текенсене ачасемпе çамрăксен клубĕнче шахмат пӳлĕмĕнче çырăнтараççĕ. Эпир сире ырă сунса кĕтетпĕр.

А.КОСТИН.

# Пире укçа кирлĕ мар

*Уяв юррисем*

- Эпир вир акатпăр, акатпăр.
- Эпир ăна таптатпăр, таптатпăр.
- Эсир мĕнле таптаттăр, таптаттăр?
- Эпир лаша яратпăр, яратпăр.

- Эпир ăна тытатпăр, тытатпăр.
- Эсир мĕнпе тытатăр, тытатăр?
- Чĕн йĕвенпе тытатпăр, тытатпăр.

- Тытсан ăçта хупатăр, хупатăр?
- Чул витене хупатпăр, хупатпăр.
- Эпир ăна илетпĕр, илетпĕр.

- Эсир мĕнпе илетĕр, илетĕр?
- Çĕр сум парса илетпĕр, илетпĕр.
- Пире укçа кирлĕ мар, кирлĕ мар.

- Сире тата мĕн кирлĕ, мĕн кирлĕ?
- Пире кирлĕ сарă хĕр, сарă хĕр.

Пулсан пултăр сарă хĕр, сарă хĕр.

Пухса йĕркеленĕ Е.ИЛЮШКИНА.

# ПАХАЛĂХА ПĂХСАХ ПĔЛМЕ ПУЛАТЬ

Какай пăсăлманнине ăна пӳрнепе пусса пăхса пĕлме пулать. Пуснă вырăнти путăк тӳрех тикĕсленмесен - какай лайăххипех.

* * *

Пахалăхлă кăлпассин хуппи типĕ, çирĕп, таса, фарш çумне çирĕп çыпăçса тăрать. Касса пăхсан, фарш çирĕп, сĕтеклĕ, унта тĕксĕм вырăнсем çук.

* * *

Чăх миçе çулта пулнине урине пăхса пĕлме пулать. Ват чăхсен ура тирĕ хытă, сарăрах тĕслĕ, вĕтĕ хупăпа витĕннĕ.

* * *

Çамрăк чăхсен пуç тĕпеки çутă хĕрлĕ тĕслĕ, урин хыçалти чĕрни пĕчĕк.

* * *

Тăварлă шыва янă çăмарта тĕпне анать пулсан пахалăхĕ аван, пăсăлнă çăмарта çиеле ишсе тухать.

* * *

Паха чĕрĕ пулă шывра путмасть.

* * *

Нумай упраннă çĕпрен хăвачĕ пĕтменнине те шыва ярса пĕлме пулать, вăл çиеле ишсе тухать пулсан, аваннипех юлнă.

* * *

Тимĕр банкăри консерва пахалăхне пӳрнепе пуссан пĕлме май пур. Пуснă вырăн тӳрленме пуçлать пулсан, консерва пăсăлнине пĕлтерет.

# Сăмахкаçмăш




**СЫЛТĂМАЛЛА:** **3.** Центрти телевиденин информаци кăларăмĕ. **4.** Л.Толстой калавĕ. **8.** Симĕс тĕслĕ паха чул. **10.** Пĕчĕк çеç ...сарă тулла юратать (ват. сăм.). **11.** Атăçăн ĕç хатĕрĕ. **12.** Чăваш композиторĕ, юрăçă. **15.** Йывăр та хулăн çăм пир. **17.** Араб çĕршывĕсенче - ăру-йăх пуçĕ. **18.** Пуçа тăхăнмалли. **19.** Хаклас, çитменлĕхсене палăртас тĕллевпе мĕне те пулин тĕплĕн тишкерни. **20.** Йышпа утмалли хăватлă кĕвĕ. **22.** Вăхăта усăллă ирттерни. **24.** Чăвашсен паллă композиторĕ. **27.** Лару-тăру çивĕчленни. **28.** Азири çĕршывăн тĕп хули. **29.** Çар званийĕ. **30.** Иранри, Тунисри укçа единици. **31.** Хирĕçле зарядлă электрод.

**АЯЛАЛЛА:** **1.** Пысăк, капмар, илемлĕ çурт. **2.** ...па çыхланиччен çаврăнса ут. (ват. сăм.). **3.** Планета. **5.** Атте ашшĕ. **6.** Музыка инструменчĕ. **7.** Космонавтсем тренировка ирттермелли сасă витмен камера. **9.** Китайри, Индири, Пакистанри юхан шыв. **13.** Пĕр-пĕр ĕç тума чĕнекен туртăм. **14.** Произведенири тĕп ĕçсем аталанса пыни. **16.** Камитле ĕç, мыскара. **17.** "Çын валли ... ан чав, хăвах кĕрсе ӳкĕн (ват.сăм.). **21.** Квалификаци шайĕн виçи. **23.** Темиçе сасăн пĕрлешнĕ янăравĕ. **24.** Асатте кил хушши тытать, ... -пӳрт ăшши (ват. сăм.). **25.** Пан улми сорчĕ. **26.** Сывлăшра сиксе çаврăнни.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çыруcемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4341